## Хусанкай

Хусанкай хăйĕн пĕтĕм вăйне,
Çăлтăр пек çуталан ăс-халне,
Пархатарлă хĕрӳ пурнăçне
Парнелерĕ тăван халăхне.

Хусанкай тăван халăх ятне,
Илĕртӳллĕ чĕлхе илемне,
Ун сăваплă сӳнми хăватне
Илсе тухрĕ тĕнчемĕр умне.

Хусанкай пиллесе хăварни,
Унăн хаклă, асамлă парни
Нихăçан тухас çук асăмран, –
Ăна уншăн тавах чун-вартан!

Хусанкай чунĕпе, ĕçĕпе,
Янăравлă сăвви-юррипе
Юлчĕ пирĕн пин-пин чĕрере,
Юлчĕ пирĕн асра – ĕмĕре!

*Давыдов-Анатри, В. Хусанкай / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 258.*